## «СУВАРА» ҪЫРĂНАР!

«Татарстан почтасы» почта ҫыхăнăвĕн управленийĕ вулакансене парне турĕ — 2003 ҫулхи I ҫур суллăх хакĕпе (65 тенкĕ те 40 пус) ҫулталăклăхах хаҫат-журнал ҫырăнма май пур. Ҫăмăл майпа ҫырăнассин срокĕ кĕске: февралĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа мартăн 31-мĕшĕччен кăна.

«Сувар» редакцийĕ хăйĕн яланхи тусĕсемпе ҫĕнĕ вулаканĕсене васкасах почта уйрăмне ҫитме сĕнет — 2003 ҫулăн II ҫур ҫулне ҫырăнтару хакĕсем ӳсес хăрушлăх пур.


Чăваш пулар, пĕрле утар!

# Сувар

6№
(476)
эрнекун
нарăс уйăхĕн
(февралĕн)
7-мĕшĕ,
2003 ҫул

Республиканская общественно-политическая чувашская газета
Тутарстан Республикинчи чăвашсен обществăпа политика хаҫачĕ


## ХУРҪĂ УТ ХĔРАРĂМСЕНЕ ПАРĂНАТЬ

Февралĕн 1-мĕшĕнче Хусанти тĕп стадионра хĕрарăм-автомобилистсем хушшинчи хула чемпионачĕ иртрĕ. Кун пек турнирсем йăлана кĕнĕ ĕнтĕ, кашни ҫулах йĕркелеҫҫĕ вĕсене. Хальхинче 26 ҫын ăмăртрĕҫ, машинăсен маркисем те тĕрлĕрен — пĕчĕк «Окаран» пуҫласа йывăр тиевсем турттаракан «Газель» таранах. Кашни хĕрарăмăн виҫĕ тапхăр иртмелле: ятарлă трасса ҫинче автомобиль тытса пыни, вăхăтпа; техтĕрĕслев; экзамен, 20 ыйту ҫине хуравламалла.

Светлана Ипкеева пур тапхăра ăнăҫлă «парăнтарса» ҫĕнтерӳҫĕ ятне илчĕ.





Ильдар МУХАМЕТЗЯНОВ сăнӳкерчĕкĕсенче: Жанна Бухеева историк тăватă ҫул ҫурă каяллах «Дэу-матиз» хурçă ута «çăварлăхланă», çавăнпа хăйĕн ăсталăхĕ пирки иккĕленмест; телейлĕ ҫĕнтерӳҫĕ — Светлана Ипкеева.

### ХĂРУШĂ ТРАГЕДИ

Иртнĕ шăматкун «Колумбия» космос карапĕ ҫунса кайни Америкăшăн кăна мар, пĕтĕм тĕнчешĕн пысăк трагеди пулчĕ. Ученăйсем шутланă тăрăх, авари сăлтавĕ — карап вĕҫсе хăпарнă чухнех ăна ҫиелтен хуплакан термоплитасенчен пĕри хăпăнса ӳкни. Вĕсем карапа пысăк температурăран сыхлаҫҫĕ. Ҫеккунтра 8 километр хăвăртлăхпа вĕҫекен карапăн тулашĕнчи сийĕ атмосферăна кĕрсен 3 пин градус таран вĕриленсе каять. Ҫакна, паллах, нимле чĕрĕ организм та чăтаймасть. Карапăн ҫичĕ ҫынтан тăракан экипажĕнче икĕ хĕрарăм тата Израилĕн пĕрремĕш астронавчĕ пулнă.

### ПЕНСИ ӲСЕТ

РФ правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн Раҫҫейре февралĕн 1-мĕшĕнчен пенсисем 6 процент ӳсеҫҫĕ. Ĕҫ пенсийĕн тĕп пайĕ 30 тенке яхăн ӳссе 553 тенке ҫитет. Ҫапла вара, вăтам пенси шайĕ 1500 тенкĕпе танлашать.

Кăҫал пенсисене тата тепĕр икĕ хутчен ӳстерме палăртнă — апрельте тата августра. Апрелĕн 1-мĕшĕнчен 12,6 процент, августра 6 процент таран индексаци тăваҫҫĕ. Ҫапла вара, вăтам пенси ҫулталăк вĕҫĕнче 1650 тенке яхăн ҫитмелле.

Ноябрь уйăхĕнче, бюджета ăнăҫлă пурнăҫласа пырсан, пенсисене тата тепре индексаци тума пултараҫҫĕ.

### ТЕХНИКА ЙӲНĔРЕХ ПУЛĔ

РФ ял хуҫалăх министерстви 2003 ҫулта лизинг урлă паракан ял хуҫалăх техникин хакне чакарасси ҫинчен йышăну турĕ. Алексей Гордеев министр шучĕпе, ҫак йышăнăва пурнăҫа кĕртес тесен министерствăпа предприятисем хушшинчи организацисен шутне чакармалла. Ăна пула лизингпа сутăнакан техника хакне 3 процент ытла пĕчĕкрех тума пулать. Халлĕхе вара «Росагролизинг» урлă килекен трактор-машинăсем 15 процент хаклăрах. 2003 ҫулта Раҫҫей правительстви ҫĕршыври хуҫалăхсене лизинг майĕпе техникăпа тивĕҫтерме 4,3 миллиард тенкĕ уйăрнă.

### МУЗЕЙРЕ ЧĂВАШ КОСТЮМĔ

Ҫырчаллинчи истори музейĕнче «Ыркăмăллăхăн та ячĕ пур» выставка уҫăлнă. Унта республикăра пурăнакан халăхсен наци костюмĕсене, алкасемпе шăрçасем, музыка инструменчĕсем курма пулать.

Выставкăна уҫнин сăлтавĕ — музей чăвашсен авалхи туй костюмне туянни. Иртнĕ эрнере выставкăра ҫĕнĕ экспонат презентацийĕ иртнĕ. Унта вырăнти чăваш общинин представителĕсем те хутшăннă.

### ХАРĂСАХ ИКĔ ЮБИЛЕЙ

Элметре хулан 50 ҫулхи юбилейне паллă тăвасси пирки йĕркеленĕ комитетăн пĕрремĕш ларăвĕ иртрĕ. Ăна ТР Премьер-министрĕ Рустам Минниханов ертсе пычĕ.

Пĕлтĕр октябрьте Тутарстанăн Министрсен Кабинечĕ хулан юбилейĕ пирки ятарлă йышăну тунă. Нефтяниксем ыйтнине шута илсе 2003 ҫулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче тӳрех икĕ уяв ирттерме йышăннă: Элмете 50 ҫул тата Тутарстанра нефть ҫулама пуҫланăранпа 60 ҫул ҫитни.

Администраци пуҫлăхĕ Ришат Абубакиров каланă тăрăх, хула администрацийĕ уяв мероприятийĕсен комплекслă планне хатĕрленĕ, «Татнефть» УАО пулăшнипе хулари ҫуртсен строительствине юсав ĕҫĕсене тăваҫҫĕ, ҫавăн пекех урамсемпе лапамсене паянхи вăхăтпа килĕшӳллĕ йĕркене кĕртеҫҫĕ.

**Хамăр инф.**

### ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ ШЕФА ИЛНĔ

Пăвари ача ҫуртĕнче ҫитĕнекенсемшĕн Патшалăх Канашĕ ăнлав уйрăм ҫынсемпе тачă ҫыхăнать. Иртнĕ эрнере вĕсем парламент секретарĕпе Валентина Липужинăпа, ТР халăх депутачĕсемпе Роза Туфетуловăпа тата Александр Штанинпа паллашрĕҫ. Патшалăх Канашĕн аппаратĕнче ĕҫлекенсемпе депутатсен делегацийĕ ача ҫурчĕ валли тумтирсем, кĕнекесем, теттесем пухнă, ҫаплах укҫапа пулăшакансем те пулнă.

Пăвари ача ҫурчĕ пысăк мар, 88 ача ҫитĕнет унта. Кăҫал тăватă хĕрача вăтам шкул пĕтерни ҫинчен аттестат илеҫҫĕ. Вĕсене 250-шар тенкĕ укҫа пачĕҫ. Ача ҫуртне парламентран килнисем икĕ телевизор парнелерĕҫ. Паллах, хăнана тутлă апат-ҫимĕҫсĕр килеймĕн — панулмисем, апельсинсем... тăраничченех ҫирĕҫ ачасем. Район администрацийĕн пуҫлăхĕ Аглям Садретдинов, Патшалăх Канашĕн депутачĕ, парне турĕ — йĕлтĕрсем, хоккей инвентарĕ пачĕ.

Парнесемпе кăмăллă ачасем тĕлпулăва концертпа вĕçлерĕҫ. Хăнасем сентябрьте татах килме шантарчĕҫ.

**«Татар-информ».**

## ХАВХАЛАНТАРАКАН ОЛИМПИАДА

Мордва халăхĕ мăкшăсемпе ирҫесенчен тăрать. Ку халăх Тутарстанра вырăнĕ-вырăнĕпе Пĕкĕлме, Ҫарăмсан, Теччĕ тăрăхĕсенче пурăнать. Мордвасен обществи те пур АНКОра. Акă ĕнтĕ иккĕмĕш ҫул пирĕн республикăра мордва (ирҫепе мăкшă) чĕлхисемпе литературин олимпиади иртет. Унта хутшăнакан ачасен шучĕ чăвашсемпе ҫармăссенчен сахалрах пулин те, пĕлӳ енчен Тутарстанри мордва вĕренекенĕсене жюри пысăк хак пачĕ. Иккĕмĕш олимпиада декабрь вĕҫĕнче иртрĕ. Тăван чĕлхене аталантарма май пурришĕн ытларах вĕрентекенсем хĕпĕртеҫҫĕ. Пултаруллă ачасене Вĕрентӳ министерстви чысламе те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мордови Республикинчен килнĕ жюри членĕсем Владимир Попов тата Василий Наумов та ҫав шухăшлах: олимпиада ачасене хавхалантарать.

**Константин МАЛЫШЕВ.**

Автор сăнӳкерчĕкĕсенче: Василий Наумов; олимпиадăна хутшăннă мордва вĕренекенĕсем.





